**Лев-Арăсланăма – ывăлăма**

Савнă чунăм, çитĕн эсĕ,
Аçуна ан ман.
Вăл путман шыва кĕрсен те,
Вутра та çунман.

Чăн мухтавлă поэт пул эс,
Композитор пул!
Юрру-кĕввӳ янăратăр
Тĕнчипех ун чух.

Вăрçă кунĕсем тискеррĕн
Кĕрлесе иртсен,
Аслă тинĕс пек кӳленнĕ
Чĕрĕ юн типсен;

Пур çĕршыв пĕр пек илемлĕн
Чечеке ларсан,
Тĕнчери мĕнпур этемлĕх
Юрласа ярсан;

Эс ун чух вара асилĕн
Савнă аçуна.
Вăл вĕри чунтан юратнă,
Чунăмçăм, сана!..

Çавăнпа та вăрçа тухнă
Паттăр çапăçма,
Телейӳшĕн, çĕршывушăн

Хӑй пуҫне хума.

Тен, ун чух сан курас килӗ
Аҫун тӑприне.
Анчах эс ӑна тупаймӑн
Вӑрҫӑ хирӗнче.

Хӑй пулмин те, ячӗ юлӗ
Чул юпа ҫинче,
Хӗрлисем хаяр арслан пек
Ҫапӑҫни ҫинчен.

Эс унта пырса вулайӑн...
Ҫывӑх хушамат
Чӗрӳне кӑлтах сиктерӗ,
Ярӗ шухӑша.

— Эх, атте, атте, кунта-им
Хунӑ эс пуҫна? —
Тейӗн те хуллен, йӑвашшӑн
Шӑлӑн эс куҫна.

Ун чухне тискер фашизм
Пулмӗ тӗнчере.
Урнӑ вӑрҫӑсем ҫинчен те
Ҫырмӗҫ пичетре.

Асӑнсан та асӑнайӗҫ
Ылханса кӑна.
Манӗҫ йытӑ Гитлера та,

Манĕç шуйттана!

Вăхăт çитĕ, мирлĕх çитĕ,
Каймĕ çын килтен,
Садри кайăк пек телейлĕ
Пурăнĕ этем.

Çавăн чух эс аннӳне
Пыр та ытала,
Ман ятпа пĕрре чупту та,
Çакăн пек кала:

— Эх, аннем, аннем, ан çун эс,
Ан тăк куççульне.
Куççульпе нихçан чĕртеймĕн
Паттăр вилĕмне.

Вăл пире чунтан юратнă,
Савнă чĕререн,
Çавăнпа пуçне çухатнă
Вăрçă хирĕнче.

Хăй пулмин те ячĕ пур ун,
Ячĕ пирĕнпе.
Ырă ят вăл, чаплă ят вăл,
Юлĕ ĕмĕре!

*Ноябрĕн 11-мĕшĕ, 1941 çул.*

*Бараев, В. Лев-Арăсланăма - ывăлăма : [сăвă] / В. Бараев // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 98-99.*